26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
9
ШАМАТКУН
201(6438) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕçсыннн депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тырă парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

30. Шупашкар районĕнчи **«Зерно» колхоз** (колхоз председателĕ **Скворцов** юлташ комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Андреева** юлташ). Колхоз тĕштырăсене, лайăх ĕçлесе, вăхăтра пухса кĕртнĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

31. Улатăр районĕнчи **«Стахановец» колхоз** (колхоз председателĕ **Шишуев** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Пименов** юлташ). Колхоз 626 гектар тĕштырра вăхăтра пухса кĕртнĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

32. Улатăр районĕнчи **«Юность» колхоз** (колхоз председателĕ **Гогин** юлташ, пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ **Гогина** юлташ). Колхоз 126 гектар тырра вăхăтра пухса кĕртнĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

33. Улатăр районĕнчи **«Красное Анютино» колхоз** (колхоз председателĕ **Куряев** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Арефьева** юлташ). Колхоз тырпулсене вăхăтра вырса пĕтернĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

34. Первомайски районри **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Игнатьев** юлташ). Колхоз тĕштырăсене вăхăтра тата лайăх вырса пĕтернĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

Фронтовой уйăхлăхра фронтри пек ĕçлемелле

(Республикăри радиопереличкăран)

Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Анчах хăшпĕр районсем халĕ те фронтри пек ĕçлемеççĕ-ха. Çакă вăл октябрĕн 8-мĕшĕнче пулса иртнĕ республикăри радио перекличкăра уççăн палăрчĕ.

Партипе правительство кăтартса панă тăрăх октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтермелле. Çакна пурнăçа кĕртме Комсомольски районра пур условисем те пур. Çанталăк та лайăх тăрать. Апла пулин те ку районра авăн çапма васкамаççĕ. Пачах урăхла, кунта авăн çапасси вăраххланнăçемĕн вăраххланса пырать. Сентябрĕн 25-мĕшĕпе октябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче 1003 гектар тыррине çапнă пулсан, октябрĕн 1-мĕшпе 5-мĕшĕ хушшинче 437 гектар тыррине çеç çапнă. Районри 9 колхоз кăна авăн çапса пĕтернĕ. Район кая юлса пынин сăлтавĕ ВКП(б) райком секретарĕ Георгиев юлташшăн та, райисполком председателĕ Падюков юлташшăн та паллă: нумай колхозсенче ĕçе питĕ кая юлса тухаççĕ, ĕçрен питĕ ир кĕреççĕ, тÿррĕнрех каласан, вăрçă вăхăчĕ çинчен манса каяççĕ. Георгиевпа Падюков юлташсем çакна лайăх пĕлеççĕ, анчах татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Çавна пулах кунта государствăна тырă парас ĕç те начар пулса пырать.

Пăрачкав районĕнче вара авăн çапас ĕç чиперех пулса пырать темелле. Вĕсем авăн çапаççĕ, анчах тырри ăçта-ха вĕсен, мĕншĕн вĕсем государствăна тырă парас ĕçре чăтма çук юлса пыраççĕ? Çакна вара ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кукушкин юлташ халиччен ăнланман пулас. Районра тырă пама ипарласах васкамасăр тăракан çынсем те пур. Вĕсем тырра вăрлăх фондне те тата ытти çĕре те яраççĕ, чылай чухне вăрăсемшĕн те майсем туса параççĕ, анчах государствăна пама васкамаççĕ. ВКП(б) райкомĕпе райисполком та çав саботажниксене çирĕп ответ умне тăратма васкамаççĕ. Çавăнпа та районра государствăна тырă парас ĕç вăраххланнăçемĕн вăраххланса пырать.

Елчĕк районĕн руководителĕсем вĕсен районĕнче тырă парас ĕç юлса пынине çапла ăнлантарса параççĕ: вĕсене е квитанцисем питĕ кая юлса çырса параççĕ иккен, е лаборантсем тырă йышăнса ĕлкĕреймеççĕ,—пĕтĕм ĕçĕ те çавăнта çеç. Чăнах та, Елчĕк районĕнче комбайнсем те, молотилкăсем те питĕ нумай. Вĕсене кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттерсен, лаборантсем чăнах та тырă йышăнса ĕлкĕреймĕç, тен. Квитанцисем çырма та васкамалла пулĕ. Анчах халĕ Елчĕк районĕ лаборантсем патне тырă сахалтарах илсе пырать-ха.

Кĕрхи çĕртме тума лашасем пушанаймарĕç-ха,—теççĕ хăшпĕр юлташсем. Анчах лашасем улăхсенче ĕççĕр чупса çÿренине курмаççĕ, вăкăрсемпе тата хĕсĕр ĕнесемпе ĕçлемеççĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз 48 вăкăра кÿлсе кĕрхи çĕртме тунă. Çакă ĕнтĕ колхоза пысăк пулăшу панă. Пăрачкав районĕнче çапла тумаççĕ вара. Унта лашасемпе кĕрхи çĕртме тăваççĕ, анчах... колхоз хирĕнче мар, колхозниксен пахчисенче.

Кĕрхи çĕртме усси пысăкрах пултăр тесе, халĕ хире тислĕк кăларса тăкмалла. Çакна Вăрнар районĕнчи колхозниксем лайăх ăнланнă. Вĕсем çĕртме тумалли уя 15.807 тонна тислĕк кăларнă. Калинино, Красноармейски, Етĕрне, Чкаловски тата ытти районсем хире пĕр тонна та тислĕк кăларман.

Кĕрхи сивĕ кунсем çывхараççĕ, килес вăхăтрах çумăрлă çанталăк пуçланма пултарать. Çавăнпа та пахча-çимĕçсене, техникăллă культурăсене хăвăрт пухса илмелле, кантăрпа йĕтĕне шыва хутса кăларас ĕçе хăвăртлатмалла, ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене васкасах туса пĕтермелле. Çапла тума хушать пире фронт, çапла тума ыйтать паттăр Хĕрлĕ Çар.

Ирĕке кăларнă районсене — выльăх-чĕрлĕх

СЕНТЕР. (**Хамăр корр.**). Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсем валли правительство выльăх-чĕрлĕх сутма хушнине районри колхозсемпе колхозниксем тулли кăмăлпа пурнăçлаççĕ. Ахмане ялсоветĕнчи «Красный Богатырь» тата Юваново ялсоветĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем çак ĕç пуçлансанах 6-шар сысна сутрĕç. Çапла вĕсем хăйсене панă заданисене районра пуринчен малтан тултарчĕç. Оринино ялсоветĕнчи «Красная Чувашия», «Восток», «Аврора», Ильинка ялсоветĕнчи «Краснофлотец» тата Шупуç ялсоветĕнчи «Броневик» колхозсем те хăйсен заданийĕсене срокчен пурнăçа кĕртрĕç. «Восток» колхоз 7 сурăх сутрĕ. Ку колхозсем сутнă выльăхсем таса та мăнтăр, правительство палăртнă виçерен те йывăртарах.

Нимĕç пусмăрçисенчен ирĕке тухнă районсене выльăх-чĕрлĕхлĕ пулма пирĕн уйрăм колхозниксем те пулăшаççĕ. Оринино ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз членĕсем 6 сурăх сутнă. Хачăк ялсоветĕнчи «Майăн пĕрремĕшĕ» колхоз членĕ П. Скворцов юлташ хăй 2 сурăх сутнă.

СССР Совнаркомĕнче

СССР Совнаркомĕ çумĕнче православнăй вырăс чиркĕвĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Совет туни çинчен

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх СССР Совнаркомĕ çумĕнче православнăй вырăс чиркĕвĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Совет тунă, вăл СССР правительствипе Мускав тата пĕтĕм Руç патриархĕ хушшинче православнăй вырăс чиркĕвĕн ĕçĕсем тĕлĕшпе СССР правительстви татса памалли ыйтусем тăрăх çыхăну тытса тăма пулăшмалла.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи православнăй вырăс чиркĕвĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Советăн председателĕ пулма Г. Г. Карпов юлташа уйăрса лартнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Тыла фронт патне илсе пыма кирлĕ вăхăт хушши чарăнса тăнă хыççăн пирĕн çарсем çĕнĕрен пĕтĕм фронт талккăшĕпех, ВИТЕБСК хулинчен пуçласа ТАМАНЬ çурутравĕ патне çитиччĕнех, нимĕççен фашистла çарĕсене тапăнса, малалла кайма пуçланă.

ÇУРÇĔР КАВКАЗ фронтĕнчи çарсем ТАМАНЬ çурутравĕ çинче тăшман йышăнса тăракан вырăна ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ. ТАМАНЬ хулипе портне тата ВЫШЕСТЕБЛИЕВСКАЯ, АХТАНИЗОВСКАЯ, ГОЛУБИЦКАЯ, СЕМЕНЮК, СЕННАЯ, ПРИМОРСКИЙ, СОЛЕНЫЙ ятлă ялсене тытса илнĕ. Тăшманăн çурутрав çинчен куçса кайма ĕлкĕреймен çарĕсене пĕтереççĕ.

ДНЕПР шывĕн вăтам пайĕнче пирĕн çарсем шыв урлă ăнăçлăн каçнă та виçĕ çĕрте: КИЕВРАН çурçĕртерехре, ПЕРЕЯСЛАВ хулинчен кăнтăртарахра тата КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре — малалла тапăнса пыма кирлĕ вырăн тытса илнĕ. Пирĕн Днепр шывĕ урлă каçнă чаçсене хирĕç нимĕçсем хаяр контратакăсем тăваççĕ. Ку контратакăсене пирĕн çарсем тăшмана пысăк çухатусем кÿрсе сире-сире яраççĕ. Пирĕн çарсем хăйсем тытса илнĕ вырăнсене утăм хыççăн утăм аслăлатса пыраççĕ.

КАЛИНИН фронтĕнчи çарсем, нимĕççен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине 25 километр сарлакĕш татса, 25 километр таран шалалла кĕнĕ. Икĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн НЕВЕЛЬ хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ, çавăн пекех тата 100 яла ытла йышăнса илнĕ.

КИРИШИ хулипе чугун çул тĕввинчен çурçĕртерехре ВОЛХОВ фронтĕнчи çарсем тăшман оборонине татса кĕнĕ те, 15 километр таран малалла куçса, КИРИШИ хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ, çавăн пекех тата НОВЫЕ КИРИШИ, ЛАРИОНОВ ОСТРОВ, ПОСАДНИКОВ ОСТРОВ, МЕРЯТИНО, КРАСНОВО, ДУБРОВО, ДРАЧЕВО, МЯГРЫ ятлă ялсене тата ПОСАДНИКОВО, ИРСА ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Октябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕççен 32 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен тупăсем тăшманăн 44 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Тамань çурутравĕ çинче пирĕн пехотнăй тата танковăй подразделенийĕсем тăшманăн Тамань çурутравĕн кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи пайне хÿтĕлекен сооруженийĕсене атакăланă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем тăшман оборонине татса кĕнĕ те, хăвăрттăн малалла куçса, Тамань хулипе портне тытса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче танксем, тупăсем, пысăк складсем тата патронсен, снарядсен, минăсен, хĕçпăшалсен, апат-çимĕçсен тата çар хатĕрĕсен пысăк запасĕсем пур.

Нимĕççен фашистла захватчикĕсенчен Тамань çурутравĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайне ирĕке кăларнă хыççăн пирĕн çарсем çавăн пекех тата Тамань заливĕнчи Семенюк портне, тăшман оборонин вăйлă çирĕплетнĕ Голубицкая ятлă пунктне (Темрюк хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре) тата ытти ялсене те тытса илнĕ. Пĕр ялта кăна пирĕн боецсем боеприпассен, апат-çимĕçĕн тата тĕрлĕ пурлăхсен 28 складне тытса илнĕ. Тăшмана ку çапăçусенче çынсем тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем кÿнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Пирĕн çарсем тăшманăн аркатса тăкнă, çурутрав çинчен куçса кайма ĕлкĕреймен чаçĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Пирĕн авиаци Керчь проливĕнче тăшман суднисене çаплах пыра-пыра çапнă. Нимĕççен пехотине пролив урлă каçарма хăтланнă темиçе баржăпа катера шыва путарнă.

* * *

Пирĕн çарсем Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та виçĕ тĕлте: Киевран çурçĕртерехре, Переяслав хулинчен кăнтăртарахра тата Кременчугран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре — малалла тапăнса пыма кирлĕ вырăнсем тытса илнĕ. Тăшман пур участоксенче те хаяррăн хирĕç тăрса çапăçать, совет çарĕсем малалла куçса пынине чарма хăтланать. Нимĕççем çапăçăва хăйсен пехотин, танкĕсен тата авиацин пысăк вăйĕсене кĕрте-кĕрте яраççĕ. Пирĕн Днепр урлă каçнă çарсем, тăшманăн пур контратакисене те сире-сире ярса хăйсем йышăнса илнĕ вырăнсене утăм хыççăн утăм аслăлатса пыраççĕ. Çав çапăçусенче нимĕç çарĕсене йывăр çухатусем кÿреççĕ. Пĕр соединени Переяславран кăнтăртарахра кĕрешекен чаçĕсем тăшман контратакисене сире-сире ярса кун каçиччен 2.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн тепĕр соединени икĕ кун хушши пынă çапăçусенче тăшман пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕççен темиçе вунă танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи çарсене çапăçма активлăн пулăшса пырать. Кун каçиччен пирĕн летчиксем нимĕççен 20 танкне çити, 200 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 60 вагона тата 10 цистернăна çĕмĕрсе тăкнă, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕççен 32 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче тăшман позицийĕсене артиллери хăватлăн персе тата бомбăсем пăрахса ишĕлтернĕ хыççăн пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă та икĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн Невель хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ. Çав участокра нимĕçсем икĕ çул хушшинче питĕ вăйлă укреплениссем туса тултарнă. Вĕсем темĕн чухлĕ дзот туса хунă, темĕн сарлакĕш вырăнсене минăсем лартса тухнă тата тĕреклетнĕ пунктсем туса хунă. Пирĕн çарсем тăшманăн çак оборона тăрăхне пырса çапнă та татса кĕнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, вĕсем çав татса кĕнĕ вырăн талккăшне аслăлатнă та, хăвăрттăн малалла куçса, 100 яла ытла тытса илнĕ. Совет çарĕсем çав тери хăвăрт малалла куçса пынипе нимĕçсем хăйсен пĕтĕм хĕçпăшалне тата çар пурлăхне пăрахса тарнă. Темиçе вунă тупă, темĕн чухлĕ миномётпа пулемет, боеприпассен склачĕсене, тĕрлĕ япала тата апат-çимĕç склачĕсене, çавăн пекех тата техникăпа çар пурлăхĕ тиенĕ темиçе поезда тытса илнĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшман обо-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)



ПАЯНХИ ХАРЬКОВ. Ÿкерчĕк çинче: совет штурмовикĕсем Харьков урлă Хĕвеланăçнелле вĕçсе каяççĕ.

Д. ЧЕРНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна тырă парса татрĕ

Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем государствăна 1943 çулта тырă памалли плана 100,6 процент тултарчĕç.

Пур колхозсем те пекех халĕ государствăна 1944 çулшăн авансла тырă параççĕ. Паянхи куна колхозсем хатĕрлев пунктне 1944 çулхи обязательствăсем шучĕпе 1133 центнер, натуроплата шучĕпе 270 центнер тырă леçсе панă. Вăл шутра «Красный волгарь» колхоз 77 центнер, «Сĕнтĕрпуç» колхоз—49 центнер, «Красная Армия» колхоз — 70 центнер, Киров ячĕпе хисепленекен колхоз — 88 центнер тырă леçнĕ.

Государствăна аванс шучĕпе тырă парасси малалла та пырать.

А. ВОРОНИНА,
Райуполнаркомзагăн учет ĕçĕсен заведующийĕ.

Коломна колхозникĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем, Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи ялхуçалăх работникĕсем Октябрьти аслă уява пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме чĕнсе каланине ырласа, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Иртнĕ вунă кун хушшинче районри колхозсем вырса пухнă пĕтĕм тырпулăн 15,5 процентне çапса илчĕç. 12 колхоз авăн çапса, 41 колхоз çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Государствăна çак вăхăтра 540 тонна ытла тырă панă. Хатĕрлев пунктне тырă леçес ĕçĕн графикне район ирттерсе тултарчĕ. Çавăн пекех фронтовой уйăхлăхăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче район кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕ, пур тĕслĕ техникăллă культурăсене те пухса кĕртрĕ.

Чылай колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ ÿсрĕ. «Агроном» колхоз фронтовой уйăхлăх пуçланиччен государствăна тырă памалли плана 49 процент çеç пурнăçланăччĕ. Колхозниксене фронтовой уйăхлăхăн задачисене ăнлантарса панă хыççăн çак ĕç пысăк хăвăртлăхпа пулса пычĕ. Ĕнер «Агроном» колхоз государствăна тырă йăлтах парса татрĕ. Çавăн пекех «Новая жизнь», «Красный маяк», «Коминтерн» колхозсенче те пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Государствăна ыран-паянах тырă парса татаççĕ, çĕрулми, пахча-çимĕç параççĕ.

Районра виçĕ колхоз—«День урожая», «Хĕрлĕ Чутай» тата Калинин ячĕпе хисепленекен колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсемпе каярах юлчĕç. Халĕ ку колхозсене пысăк пулăшу панă. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ «Радио» колхоз хăйĕн чылай лашисене Ворошилов ячĕпе хисепленекен колхоза пачĕ.

ПОЛЯНИН.
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Колхозăн авăн çапакан бригадисем

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн сентябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕ кăтартса хăварнисене пурнăçа кĕртсе пырса, Красноармейски районри «Тымар» колхоз авăн çапма ятарласа уйрăм бригадăсем турĕ. Колхоз правленийĕ хăйĕн активне пленумăн решенийĕсемпе тĕплĕн паллаштарчĕ, кунĕн-çĕрĕн авăн çапса, çак ĕçе октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме йышăнчĕ.

Çакăн хыççăн бригадирсем авăн çапма чи лайăх ĕçлекен колхозниксене уйăрчĕç. Вĕсене ĕç графикне ăнлантарса пачĕç.

3-мĕш бригадăра 17 колхозник улттă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн тенĕ пекех авăн çапма тытăнчĕ. Малтанхи кунах вĕсем, 18 сехет хушши ĕçлесе, ĕçĕн 5 кунхи графикне пурнăçларĕç, 13 гектар тыррине çапса пуçтарчĕç. Молотилкăна кĕлте парса тăракан В. Коськина, кĕлте йăтакан Ильин, Никитина тата ытти колхозниксем кашни икшер çыншăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Бригада ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Молотилка ĕçлени сахал, вĕсем ыраша тăпачăсемпе те çапнă, çурхи тырăсене, уйрăмах сĕлле, лашасемпе аштарнă.

1-мĕш бригадăн авăн çапаканĕсем татах та тухăçлăрах ĕçлерĕç. Иванов бригадир сĕлле йăлтах лашасемпе аштарса çаптарчĕ. Молотилкăпа вăл вăхăтра ыраш çапрĕç. Сĕлĕ çапнă çĕрте 9 лашапа 15 çын çеç ĕçленĕ. Вĕсем кунне-çĕрне пăхмасăр ĕçлерĕç. Авăн çапнă çĕрте графикпа ĕçлени ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕ; бригадăсем хушшинче çеç мар, уйрăм колхозниксем хушшинче те социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ.

График тăрăх колхозăн виçĕ бригади 5 кун хушшинче 40 гектар тыррине çапса пуçтармалла пулнă, çак чурмăна вĕсем икĕ талăк хушшинче пурнăçларĕç. Ĕç графикне тултарса пырассишĕн кашни колхозник тăрăшрĕ. Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа колхозра ĕçе тухмасăр кун сиктерни пĕр çын та пулман. Авăнпа пĕрлех колхозра ытти ĕçсем те ăнăçлă пулса пычĕç. Транспорт бригади 15 лашапа пĕрмаях тырă, пахча-çимĕç, çĕрулми турттарчĕ. Çапла вара октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне колхоз государствăна тырă, çĕрулми тата пахча-çимĕç пĕтĕмпех парса татрĕ, авăн çапса пĕтерчĕ. 1944 çулшăн аванс шучĕпе натуроплата тыррине пама пуçларĕ. Йĕтĕн-кантăрсене шыва хутса кăларнă, типĕтме çакнă. Çитес кунсенчех колхоз государствăна сÿс-кантăр парать.

Ялхуçалăх ĕçĕсен ăнăçлăхĕ колхоз правленийĕ ĕçе тимлĕн ертсе пынинчен нумай килет. «Тымар» колхоз руководителĕсемпе бригадирсем çакна авăн ăнланса илнĕ. Вĕсем ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухса, кашни çынна тухăçлăн ĕçлеме май параççĕ.

С. ШАДИН,
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Литовецсен дивизийĕн делегацийĕ фронта тухса кайрĕ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ чĕннипе килнĕ литовецсен дивизийĕн делегацийĕ Етĕрне, Çĕмĕрле, Элĕк, Советски, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи тата Шупашкар хулинчи ĕççыннисемпе тĕл пулса калаçрĕ. Делегаци нумай колхозсенче, заводсенче, госпитальсемпе шкулсенче, ача çуртĕсенче пулса, пурĕ 8840 çынпа тĕл пулнă.

Делегацие Литвари Коммунистсен партин Центральный Комитечĕпе Литва ССР Совнаркомĕн уполномоченнăйĕ Маркунас юлташ ертсе пычĕ. Делегаци составĕнче—Александр Невский орденĕн кавалерĕ, тăватă орденпа наградăланă капитан Ситникас, Литва ЦК ВЛКСМ представителĕ, Александр Невский орденĕн кавалерĕ лейтенант Рестас, икĕ орден илнĕ лейтенант Новицкас, старши сержант орденоносец Золотас, батальон комсоргĕ старшина Гинтаутас тата Литва партизанĕсен представителĕ Вершила юлташсем.

Чăваш ĕççыннийĕсем литовецсен дивизийĕн делегацине пур çĕрте те ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе, хăналаса ăсатнă. Делегаци участникĕсем пирĕн республикăри колхозсемпе заводсен ĕçĕпе паллашса, хăйсен шухăш-кăмăлĕсене пĕлтернĕ, мухтавлă ĕçлекен рабочисемпе тата колхозниксемпе тĕл пулса калаçнă.

Делегаци ĕнер, октябрĕн 8-мĕшĕнче, фронта тухса кайрĕ. Делегаци республикăри ĕççыннисем патне çакăн пек çыру çырса хăварчĕ:

«Литовецсен дивизийĕн делегацийĕ,—тенĕ çырура,—Чăваш республикинче пулнă хыççăн фронта тухса кайнă май, хăйне ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн тата республикăри заводсемпе колхозсен ĕçĕсемпе паллашма пулăшнăшăн ВКП(б) Обкомне, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕпе Совнаркома, çавăн пекех Етĕрне, Çĕмĕрле, Элĕк, Советски, Хĕрлĕ Чутай районĕсен руководителĕсене тата мĕнпур ĕççыннисене тав тăвать.

Эпир килсенех сирĕн республикăра ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх пуçланчĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине ответлăс шутпа пуçланнă çак уйăхлăх ăнăçлăн вĕçленĕ, çакă вара Хĕрлĕ Çарăн вăйхăватне татах çирĕплетĕ.

Сывă пулччăр Чăваш тата Литва республикисенчи тăванла халăхсем!

Сывă пултăр мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата унăн çулпуçĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!»

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

ронине татса кĕнĕ те, наступлени туса пырса, Кириши хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ. Пирĕн çарсем тата темиçе яла тытса илнĕ. Нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăрса çапăççĕ, анчах та, чăтаймасăр, пĕр позици хыççăн теприне хăварса чакаççĕ. Пехотăна çапăçма пулăшса пыракан совет артиллерийĕ тăшманăн темиçе çĕр дзочĕпе блиндажне çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн çарсем малалла куçса пынине чарма хăтланса, нимĕçсем çав тери йывăр çухатусем тӳсеççĕ. Пĕр ялшăн çапăçнă чухне кăна пирĕн боецсем нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Ирса чугун çул станцине тытса илнĕ чух пирĕн çарсем çар хатĕрĕсем тиенĕ 50 вагона, боеприпассен складне, тĕрлĕ япаласен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Киев облаçĕнче кĕрешекен украинец партизанĕсен отрячĕ нимĕçсен чугун çулпа пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенире пушар тухнă. Горючи тултарнă 13 цистерна тата хĕçпăшал тиенĕ 3 вагон çунса кайнă. Тепĕр кунне партизансем нимĕçсен тата икĕ çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Икĕ паровоз тата 44 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ сентябрĕн 20-мĕшĕнче шоссе çулĕпе пыракан çăмăл автомашинăна пенĕ. Нимĕçсен икĕ офицерне, вăл шутра полк командирне те, вĕлернĕ. Сентябрĕн 24-мĕшĕнче Киев партизанĕсем чугун çул çинчи тата шоссе çулĕ çинчи кĕперсене (нимĕçсем каялла чакакан кĕперсене) сирпĕнтерсе янă. Йăтăнса аннă кĕперсем умĕнче поездсем тата автомашинăсем нумай кĕпĕрленсе тулнă. Çакăнпа совет летчикĕсем усă курнă. вĕсем нимĕçсем çине темĕн чухлĕ бомба тăкнă, вĕсене пысăк çухатусем тӳстернĕ.

* * *

Нимĕçсен 327-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 595-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Иоганн Егер çапла каласа панă: «Августăн 27-мĕшĕнчен пуçласа, пирĕн дивизи татти-сыпписĕр каялла чакать. Хĕлле пирĕн дивизи йывăр çапăçусенче пысăк çухатусем тӳсрĕ. Анчах çулла та çаплах каялла чакни пире питех те хуйха ӳкерчĕ. Пĕрремĕшĕнчен, эпир çулла каялла чакасси çинчен пирĕн никам та шутламан. Иккĕмĕшĕнчен—эпир каялла пĕр йĕркесĕр чакатпăр, вăхăчĕ-вăхăчĕпе хăраса ӳксех таратпăр. Пĕр чугун çул станцийĕ патĕнче эпĕ çакна куртăм: офицерсем хăйсен позицийĕсене пăрахса тарнă салтаксене переççĕ, анчах та салтаксем вĕсем çине пĕрре те пăхса тăмаççĕ, çаплах каялла тараççĕ. Пирĕн дивизи, каялла чакса пырса, темĕн тери йывăр çухатусем тӳсрĕ. Эпĕ тăнă ротăра, сăмахран каласан, 6 салтак кăна чĕррĕн тăрса юлчĕç. Офицерсем нумайĕшĕ стройран тухрĕç. Пирĕн полк командирне те вĕлерчĕç».

Вăрнар районĕ государствăна тырă памалли плана 102,8 процент тултарнă.

Ӳкерчĕк çинче: ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ С. К. КОРОТКОВ юлташ.

ФРОНТ ЫЙТНĂ ПЕК ĔÇЛЕÇÇĔ

Иртеменкасси ялсоветĕнчи колхозсем кăçал вăйлă тырпулпа пысăк тухăçлă пахча-çимĕç тăвас тата выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тесе тăрăшса ĕçлерĕç. Колхозсем тырпула 14 кун хушшинче пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕç. Ĕçре пирĕн черетлĕх пулман. Пĕрисем тырă вырнă, теприсем çапнă, государствăна тырă леçнĕ, тăваттăмĕшĕсем хĕрсех кĕр тыррисем акнă.

Çамрăк комсомолецсем Павел Кротов, Николай Егоров, хăйсен жнейкисемпе пĕр чарăнмасăр ĕçлесе, кунне 3,5 гектар вырăнне 5—6 гектар вырса пынă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри 61 çулхи Р. Анисов хиртех çĕр выртса ĕçлесе, кунне виçшер норма ытла тултарса пынă.

Элмен-Сунарти Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Максимов юлташ) 305 гектар çинчи тырпула сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне, ялсоветĕнчи малтан капансене хывса пĕтерчĕ. Кунта кăнтăрла та, çĕрле те кĕлте турттарнă.

Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвĕсем пирĕн колхозниксемпе колхозницăсене калама çук савăнтараççĕ. Вĕсен ĕçри хăвăртлăхĕ нумай ӳсрĕ. Эпир ялхуçалăх ĕçĕсене татах та хăвăртрах туса пыма тытăнтăмăр.

Халĕ колхозсенче хĕрсех авăн çапаççĕ, çĕрулми кăлараççĕ. Элмен-Сунар колхозĕ авăн çапса, çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Çак кунсенчех кĕрхи çĕртме туса пĕтереççĕ. Паянхи куна кунта 90 гектар сухаланă. «Победа» колхоз та 16 гектар çинчи çĕрулмине пĕтĕмпех кăларса пĕтерчĕ.

Колхозниксем йĕпе-сапана пăхмасăр, ырми-канми ĕçлени сая каймарĕ. Вĕсем хăйсем умне лартнă задачăна чыслăн пурнăçа кĕртрĕç, фронт умĕнче парăмлă юлмарĕç. Тырăсем авăн пулчĕç, гектартан 100 пăтран пĕртте кая тухмаççĕ.

Т. ПАВЛОВ,
Вăрнар районĕнчи Иртеменкасси ялсовет исполкомĕн председателĕ.

МАЛТА ПЫРАКАН ВĂРНАР РАЙОНĔПЕ ТАНЛАШĂР!

Ăмăрту саралсах пырать

Вăрнар районĕнчи колхозсем 16.608 гектар çинчи тырпулсене ăнăçлăн вырса пĕтерсе капана хывса лартрĕç, вăл шутран 12 пин гектар тыррине çапса пуçтарчĕç. 20 колхоз авăн çапас ĕçсене вĕçлерĕ. Пур колхозсем те пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртнĕ.

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕнче уйрăмах Уравăшри «1-ое Мая», Кольцовкари Сталин ячĕпе тăракан, Рунгари «Малый Цивиль», Хирпуçĕнчи «Победа», Çĕн Ялтăшри «Волга» тата ытти колхозсем мала тухрĕç. Çак колхозсем кашни гектартан 100-шер пăтран кая мар тĕштырă илнĕ. Пахча-çимĕçсене те чи малтан государствăна парса татнă.

Районри колхозсем паянхи кун тĕлне пурте йĕтĕн кантăр татса пĕтерсе шыва хутнă. Клеверсене çулса, кĕлтен-кĕлтен çыхса хунă. планпа 7300 гектар акас вырăнне 7800 гектар кĕрхи тырăсем акса хăварнă.

Иртнĕ çулсенче Кив Яххакасси, Сăнарпуç, Рунга, Çĕн Яххакасси колхозĕсем питĕ начар ĕçленĕ пулсан. кăçал вĕсем те малти рете тухрĕç. Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пычĕç.

Хальхи вăхăта илсен, районри колхозсем вăрлăх фончĕсене хывма тытăнчĕç. Кашни колхозах вăрлăх фончĕсем хывма райçĕрĕç пайĕ план туса панă: Сендимиркано, Кольцовка, Хирпуç, Утар тата ытти колхозсем те сĕлĕ, тулă, ыраш вăрлăхĕсене хывса çитернĕ.

Чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕхсене хĕл касарма хатĕрленсе çитеççĕ. Выльăхсем валли ăшă витесем хатĕрлеççĕ. Çакăнпа пĕрлех нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсем валли выльăхсем уйăрса параççĕ. Халĕ ирĕке кăларнă районсем валли 200 сысна, 160 сурăх янă.

Пирĕн районри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн пыракан ăмăртура мала тухас тесе ăмăртаççĕ. Ăмăрту хăйĕн результачĕсене парать. Авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне кĕрхи çĕртме планне район 35 процент ытла тултарнă.

М. МАКСИМОВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тесе, Сендимеркинăри «Гигант» колхоз членĕсем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлерĕç. Тырă вырнă вăхăтра машинистсем А. Житков, Н. Баранов, И. Миговаров хăйсен нормисене 200—300 процент тултарса пычĕç. К. Васильев юлташ машинăсене çийĕнчех юса-юса пачĕ, хăй те машиновед пулса ĕçлерĕ, куллен 5-шер гектар вырса пычĕ.

Колхозниксем кĕлтесене капана хывнă чухне çĕрне-кунне лĕлмесĕр ĕçлерĕç. Е. Федоров колхозник 72 çулта ĕнтĕ. Вăл 3—4 километртан талăкра 30—40 урапа кĕлте кӳнĕ. Кăçал вăл 280 ĕçкунĕ турĕ. Колхозра стахановецсен йышĕ ӳсрĕ. Çураки вăхăтĕнче 10 стахановец пулнă пулсан, халĕ 20 стахановец шутланать. Ку шута нормăна ик-виçĕ хут тултарса ĕçленĕ А. Долгов, В. Сергеев, М. Шиповалов, Н. Гаврилова, У. Степанова т. ыт. те кĕреççĕ.

Пирĕн колхозниксем кăçал вăйлă тырпул туса илме ĕмĕт тытрĕç. Эпир, ырми-канми ĕçлесе, çав ĕмĕте пурнăçларăмăр. Тырă вырнă чухне те, авăн çапнă чухне те тырпула тăккаламарăмăр. Тырă вырнă çĕрте шкул ачисем те нумай пулăшу пачĕç.

Тырă вырма тухсан виç-тăватă кунтанах авăн çапма, государствăна тырă пама тытăнтăмăр. Çапла вара пирĕн ĕçсем кая юлмарĕç. Сентябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтертĕмĕр, çĕрулми кăларса, государствăна парса татрăмăр. Халĕ пирĕн колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ. Государствăна çитес çулшăн 100 центнер тырă панă. Хĕрлĕ Çар фондне 153 центнер тырă хывнă. Государствăна аш-какай памалли обязательствăна 1944 çулшăн та эпир пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ, Хĕрлĕ Çар фондне 38 центнер аш-какай хывнă.

Хальхи вăхăтра вăрлăх фончĕсене хывса çитерес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Ыраш, тулă, сĕлĕ, пăрçа, урпа вăрлăхĕсене хывса çитернĕ. Кĕçех тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеçсе пама та хатĕрленсе çитетпĕр. Кăçал ялхуçалăх ĕçĕнче тăрăшса ĕçлесе 250—300 ĕçкунĕ тунă Ф. Семенова, М. Железнова т. ыт. те пысăк тупăш илеççĕ. Лайăх ĕçленĕ колхозницăсене эпир 57 сынна ĕçшĕн хушса тӳлерĕмĕр. Çакă вăл колхозниксене пушшех те савăнтарчĕ. Колхозниксем кĕрхи çĕртме сухи тума та кар тухрĕç. Паянхи кун тĕлне 190 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Сухаçăсем В. Шулаев, И. Кожанов юлташсем кунне кашни 1,30 гектартан кая мар сухалаççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Вăрнар районĕнчи «Гигант» колхоз председателĕ ЧЕРНЫШЕВ юлташ (сулахайри) тата трактор бригадин бригадирĕ ИВАНОВ юлташ (сылтăмри).

Т. ЧЕРНЫШЕВ,
«Гигант» колхоз председателĕ.

Етĕрне районĕ государствăна тырă памалли плана 101,1 процент тултарнă.

Ӳкерчĕк çинче: ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ А. В. СОМОВ юлташ.

КОММУНИСТСЕН РАЙОНРИ ПУХĂВĔ

ИШЛЕЙ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрĕн 6-мĕшĕнче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта икĕ ыйту— ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен тата Сталин юлташăн кĕнекине вĕренесси çинчен сӳтсе-яврĕç. Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сидоров юлташ доклад турĕ.

Район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 69,1 процент тултарнă. 113 колхозран 42-шĕ тырă парса татнă. Катраç, Мамăш, Сыпайкасси, Чаканар, Ярапайкасси ялсовечĕсенчи колхозсем государствăна тырă парса татса, 1944 çулшăн аванс шучĕпе натуроплата тыррине панă. «Коммунист» колхоз (председателĕ К. Федоров юлташ), тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕç, аш-какай тата ытти парăмсене те парса татса, 1944 çулшăн 51 центнер натуроплата тыррине тӳленĕ. Авăн çапса пĕтернĕ. Çак малта пыракан колхозсенче коммунистсемпе комсомолецсем мĕнпур ĕçе паянхи политикăллă задачăсемпе çыхăнтарса туса пынă. Çав вăхăтрах Вăрман Сĕктер, Чантăр, Анат-Кĕнер ялсовечĕсенчи колхозсем, Шупашкар çывăхĕнчех пулин те, государствăна тырă парас ĕçре юлса пыраççĕ. Вĕсем паянхи куна çитсе те плана 60 процент кăна тултарнă. Тивĕш ялсовечĕ (председателĕ коммунист Платонов юлташ) пур ĕçре те юлса пырать. Колхозниксем: «Эпир пахча-çимĕç турттаратпăр-çке», тесе тырă пама чарăнса тăнă. Анчах пахча-çимĕçсем памалли плана та 75 процентран ытла тултарман.

Район государствăна пахча-çимĕçсем памалли плана мĕн пурĕ те 47 процент кăна пурнăçланă. Çавăн пекех техникăллă культурăсем енĕпе тата ытти обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе те ĕç сӳрĕккĕн пырать. Сăмахран, аш-какай планне 86 процент, единоличниксем 10 процент кăна тултарнă.

Иккĕмĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сазонов юлташ Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренесси мĕнле пыни çинчен доклад турĕ. Районри коммунистсемпе колхоз активĕ Сталин юлташăн кĕнекине активлăн вĕренме тытăннă. Ку тĕлĕшпе 36 кружок организациленĕ. Вăл шутран 16-шĕ колхозсенчи кружоксем. Вĕсенче 128 коммунист, 92 комсомолец, партире тăманнисем 286 çын шутланаççĕ. «Коммунист», «Клевер» колхозсенчи, МТС-ри кружоксем иккĕмĕш темăпа занятисем ирттернĕ. Анчах та «Шетмĕ пуç», «Париж Коммуни», Буденный ячĕпе хисепленекен колхозсенчи кружоксем пĕр заняти те ирттермен. «Мотор», «Красные Яуши» тата Карл Маркс ячĕпе хисепленекен колхозсенчи кружоксене ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Д. Михайлова юлташ питĕ начар ертсе пырать. Вĕсенче пĕр заняти те ирттермен.

Пренире вунă çын тухса калаçрĕç. Вĕсем ĕçри çитменлĕхсене палăртса, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен чарăнса тăчĕç. Юлашкинчен пуху тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Пирĕн авиаци Минск, Гомель, Джанкой чугун çул тĕввисене тата Мелитопольпе Быхов станцийĕсене тапăнни

Октябрĕн 6-мĕшĕнче кăнтăрла тата октябрĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшманăн, Минск, Гомель, Джанкой чугун çул тĕввисенче тата Мелитопольпе Быхов станцийĕсенче пĕр çĕре пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем станцири поездсене тӳрех лекнине палăртнă. Пушарсем нумай тухнă. Вагонсем, платформăсем, цистернăсем тата складсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Бомбăсем пăрахнине пула нумай участоксенче чугун çул çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

Пирĕн 3 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Неапольтен 27 километрта Вольтурно шывĕ урлă каçнă. Унта кĕперсем умĕнчи вырăнсенче çĕнĕ укрепленисем тунă.

ФРАНЦИРИ ПАРТИЗАНСЕН ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Арьеж департаментĕнчи (Пиренея) тусем хушшинче кĕрешекен француз партизанĕсем Виши полицийĕн отрячĕсене тата оккупациллĕ çарсен чаçĕсене аркатса тăкнă. Гитлеровецсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Оккупантсен вара полици отрячĕсемпе пĕрле Памье хулине тарса каймалла пулнă, унта вĕсем çĕнĕ вăй хушса параççа кĕтеççĕ. Тури Савойăри партизансем октябрĕн 5-мĕшĕнче Аннеси хулине тапăннă. унта вĕсем полици начальникне вĕлернĕ.

США-ра ВАРÇА ЗАЕМĔ АНĂÇЛА САРАЛНĂ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-н финанс министрĕ Моргентау çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 9-мĕшĕнче 15 миллиард доллар лăх кăларнă вăрçă заемĕ, октябрĕн 2-мĕшĕнчен илнĕ сведенисем тăрăх, 16 миллиард та 887 миллион тенкĕлĕх саралнă, тенĕ. Заем сарални çинчен татăклă пĕлтерекен сведенисем тепĕр икĕ эрнерен тин пухăнса çитессĕ.

Моргентау каланă тăрăх, заем çав тери ăнăçлă сарални Америка халăхĕ вăрçă мĕншĕн пынине лайăх пĕлнине тата Америка халăхĕ тăшмана çĕнтерме тăрăшнине пĕлтерет.

АРГЕНТИНАРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Монтевидео хулинче Аргентинăри социалистсен партийĕн исполнительнăй комитечĕ Рамирес президента панă меморандумăн текстне илнĕ. Çак меморандума Буэнос-Айресра пичетлемен. Вăл меморандум президента Америкăри ытти çĕршывсемпе килĕштерсе ĕçлесе пыма хушать.

Буэнос-Айрес хули тулашĕнчи аш-какай консервĕсен завочĕсенче 30 пин рабочи яхăн забастовка пуçласа янă. Заводсен территорине çарсем йышăннă. Çавăн пекех тата строительствăра ĕçлекен 30 пин рабочи те забастовка пуçласа янă. Забастовка тăвакан рабочисем хушшинче листовкăсем анлăн саралаççĕ. Листовкăсенче Аргентина правительствине пĕрлешӳллĕ нацисемпе килĕштерсе ĕçлеме хушаççĕ.

КĔСКЕН

● Британи çарĕсен 2-мĕш Кăнтăр Африка дивизийĕн командующийĕ Клоппер генерал-майор, Тобрук парăннă хыççăн тыткăна лекнĕскер, Италири тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕнчен тухса тарнă. Тусем урлă виçĕ эрне хушши каçнă хыççăн Клоппер Англи çарĕсем тăракан вырăна çитнĕ.

● Сентябрь уйăхĕнче Европăра, Африкăра тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен 532 самолет пĕтнĕ, акăлчансен 504 самолет пĕтнĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШСЕН ТАРАСАСЕМ ЮСАКАН ЗАВОДНЕ

Çакăч пек работниксем васкавлăн кирлĕ: бухгалтер, бухгалтер помощникĕ, кладовщик-приемщик тата плановик-экономист

Пĕччен пурăнакансене хваттер параççĕ.

Вырсарникунсемсĕр пуçне кунсеренех, ирхине 9 сехетрен пуçласа 16 сехетчен, çак адреспа ыйтса пĕлме пулать: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 46.

Заготзернон Шупашкарти пунктне главнăй бухгалтер, бухгалтерсем, кассир тата таксировщиксем кирлĕ.

Ĕçе кĕрекенсем валли столовăй пур.

Адрес: Чебоксары, Нагорная, 2.

Комсомол XXV çул тултаракан уява çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илер!

КОМСОМОЛ ЙЫШНЕ ӲСТЕРЕССИШĔН ПĔР ЧАРĂНМАСĂР ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Ленинла-Сталинла комсомолăн авторитечĕ, унăн политикăлла активлăхĕ татах та ӳсрĕ. Комсомолецсем çамрăксене кулленхи хĕрӳ ĕçре пример кăтартса ертсе пыраççĕ. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинчи çыхăну çирĕпленчĕ. Малта пыракан çамрăксем, хăйсен пурнăçĕпе ĕçне Ленинла-Сталинла комсомолпа çыхăнтарма тăрăшаççĕ, комсомолăн йышĕ ӳссех пырать.

ВЛКСМ ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕнче юлашки вăхăтра ӳсĕмсем тунă. Çĕнĕ çултан вара комсомол ретне 492 çамрăка илнĕ. Иртнĕ çулăн малтанхи тăхăр уйăхĕнче 167 çынна илнĕ пулнă. Çак цифрăсенчен районри комсомолăн авторитечĕ ӳсни аванах курăнать.

ВКП(б) обкомĕн 14-мĕш пленумĕ тата ВЛКСМ обкомĕн 8-мĕш пленумĕ решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, комсомолăн районри организацийĕ союзра тăман çамрăксем хушшинчи политикăллă ĕçе лайăхлатрĕ. ВЛКСМ пуçламĕш организацисен секретарĕсем, комсомолец-активистсем предприятисенчи, учрежденисенчи тата колхозсенчи çамрăксене ушкăнăн-ушкăнăн пухса, ВЛКСМ уставĕпе программине вĕрентнĕ, комсомол умĕнче хальхи вăхăтра тăракан ответлă задачăсем çинчен ăнлантарса панă. Çапла майпа районра комсомолăн 21 пуçламĕш организацине çĕнĕрен йĕркеленĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ хальх çирĕпленсе пыраççĕ, опытлă организацисем пекех ĕçлеççĕ.

Комсомолăн Калайкасси ялсоветĕнчи «Победа» колхозри организацине тунăранпа вăхăт нумаях иртмен. ВКП(б) кандидачĕсен группин руководителĕ Петров юлташ пулăшса пынипе, комсомол организацийĕ çирĕпленнĕ. Комсомолецсем колхозри пур ĕçе те хутшăнма тăрăшаççĕ, колхоз правленине пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем тырпулсене пухса кĕртес, государствăна тырă леçес ĕçсенче правленипе бригадирсене чылай пулăшрĕç. Комсомол организацине выльăх-чĕрлĕх фермине ĕçлекен комсомолка Федорова юлташ ертсе пырать.

Çамрăк комсомолецсене пăхса ӳстерес ĕçе «Коммунар» колхозри пуçламĕш организаци секретарĕ Мазиков юлташ лайăх йĕркеленĕ. Вăл çамрăксене Ленинла комсомолăн историйĕпе паллаштарать, отечественнăй вăрçă фронтĕнчи комсомолец-геройсем çинчен каласа кăтартать, вĕсем пек кĕрешме, ĕçлеме хавхалантарать. Çавăнпа кунта комсомолецсен ĕçри активлăхĕ те, пурнăçпа йăлари примерĕ те уççăн палăрать.

Комсомол йышне ӳстерес тĕлĕшпе Пушкăртри «Çĕнĕ çул» колхозри организаци уйрăмах лайăх ĕçлет. Организаци секретарĕ Ванюшев юлташ комсомолецсемпе çамрăксем хушшинчи политикăллă ăнлантару ĕçне кашни кун, вĕсем ăçта ĕçлеççĕ —çавăнта туса пырать. Ванюшев юлташа парторганизаци секретарĕ Кириллов юлташ пулăшса тăрать. Çамрăксем хушшинче çапла ĕçленине пула кăçал кунта ВЛКСМ ретне 15 çамрăк кĕнĕ. Вăл шутран 5 çамрăкĕ комсомол ретне тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра кĕнĕ.

«Çĕнĕ çул» колхозра—комсомолецсем пысăк вăй. Вĕсем колхозри чылай ответлă ĕçсене ертсе пыраççĕ, ăçта ĕç чарăнса тăрать—çавăнта çитсе пулăшаççĕ. Колхоз правленин государствăна тырă леçес ĕçе хăвăртлатмалла пулнă Ванюшев юлташ пуçарнипе, комсомолецсем ятарласа транспорт бригади тунă. Ун хыççăн бригада тырра график тăрăх леçсе тăма пуçланă. Çапла майпа колхоз государствăна кĕске вăхăтрах тырă парса татнă.

«Красный Октябрь», «Авангард» колхозсенче те комсомол йышĕ ӳссех пырать. Кунти организацисенче кашнинчех 10 çамрăка ВЛКСМ ретне илнĕ.

Анчах комсомолăн районри организацийĕнче ку ĕçре пысăк çитменлĕхсемех пурха. Хăшпĕр организацисем çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе юлашки вăхăтра пачах та ĕçлемен. Çак çулăн 8 уйăхĕ хушшинче районра 5 пуçламĕш организаци—«Родина», «Наука», «Коминтерн», Киров, Жданов ячĕсемпе тăракан колхозсенчи тата Шатракасси ялĕнчи организацисем саланса кайнă. Çав вăхăтрах 21 организацире комсомол ретне пĕр çамрăка та явăçтарман. Ку тĕлĕшпе уйрăмах «Майăн пĕрремĕшĕ», «Марксист», «Аврора» тата Войков ячĕпе тăракан колхозсенчи организацисем нимĕн те туман.

«Марксист», «Ударник» колхозсенчи организацисенче чылай вăхăт хушши пуху та пулман, комсомол ретне ӳстерес ыйтăва пачах сӳтсе явман. Комсомолăн «Ударник» колхозри (Ярославка ялĕ) организацин секретарĕ Шадрин комсомолецсем хушшинче пĕртте ĕçлемест. Кунта комсомолецсен дисциплини начар: хушнă ĕçсене çийĕнче тумаççĕ, член укçи вăхăтра тӳлемеççĕ. Шадрин хăй те темиçе уйăхшăн тӳлемен пек шутланать: укçине ВЛКСМ райкомне панă, анчах билет çине ал пустарман. Комсомол билетне вăл нихăçан та хăй çумĕнче тытмасть, райком пленумне те билетсăрах пынă. Райкомăн йăваш чунлă секретарĕсем Шадрина уншăн нимĕнех те шарламарĕç, пленум ĕçĕсене хутшăнма ирĕк пачĕç.

«Родник» колхозри пуçламĕш организаци секретарĕ пулса ĕçлеме Михайлова юлташа суйланă. Вăл—Юнгапуç пуçламĕш шкулĕн учительници. вĕреннĕ çын, ĕçлеме пултармалла. Организацийĕ те унăн пысăк мар: кашни комсомолец куç умĕнче, вĕсене ĕçре хавхалантарса ертсе пыма пулать. Анчах Михайлова комсомолецсем çинчен маннă. Кунта кăçал ВЛКСМ райком секретарĕ Давыдова юлташ пынă майпа пĕр хутчен пуху пулнă та, урăх пуху пухасси çинчен шутламан та. Пухусенче кулленхи ыйтусене сӳтсе-явма мар, Михайлова член укçине те йĕркеллĕ пухмасть. Организацири комсомолецсенчен чылайĕшĕ кăçалхи апрельтенпе член укçи тӳлемен. А. Апроськин юлташ ВЛКСМ ретне 1943 çулхи январьте кĕнĕ. Михайлова çак комсомолецпа ĕçлемен, çавăнпа вăл член укçи тӳлемен. Апроськин юлташ член укçи тӳлеме ВЛКСМ райкомне хăй пычĕ.

Çакăн çинчен ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем пĕлеççĕ. Михайлова çинчен бюрора та сӳтсе-явнă, ăна ĕçе тӳрлетме хушнă. Анчах Михайлова çав-çавах ĕçлемест, ВЛКСМ райкомĕ хушни те хут çинче çеç юлать.

Хальхи вăхăтра кашни организаци пĕр пек тикĕс ĕçлени, комсомол йышне куллен ӳстерсе пыни кирлĕ. Кашни комсомол организацин ВЛКСМ XXV çул тултарнă уява çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешмелле.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

Примерлă пионерка

ВАРНАР. Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозри 9 çулхи пионерка Нина Козлова çуллахи каникул вăхăтĕнче 130 ĕçкунĕ тунă. Вăл пур ĕçре те хăйне примерлă тытать. Халĕ шкулта тăрăшса вĕренет.

В. ВОРОБЬЕВА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0,67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1187 Типография №, Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.